# УХСАЙ
# СĂНАРĔ

Куç умĕнче Ухсай сăнарĕ:
Ача кулли сăн-питĕнче.
Сăввисенче вут-хĕм кăларĕ
Кĕтмен-туман самантсенче.

Силпи-Слакпуçăн эп çӳрерĕм
Ухсайпала чăн тăванла.
Калаçрăм —
Тăрана пĕлмерĕм:
Уçса ярать вăл кăмăла.

Слакпуç çăлкуçĕнчен шыв ĕçрĕ,
Питне те çурĕ тăрăшса.
Чун-чĕрипе Сетнер пек вĕçрĕ,
Шыв ăсакан хĕре курсан.

Силпи çаранĕнче кансаччĕ:
Ем-ешĕл курăкĕ — кашма.
«Кунта, эх, Кĕçтенттин пулсанччĕ...» —
Тек пĕр сăмах та шарламасть.

Хĕвел те аслă çутçанталăк
Пĕрлешнĕ пулĕ халь унпа?
Лутра çынра тăван çĕр халĕ, —
Куратăп, — иксĕлми тапать.

Трагеди, сăвă, романсем те
Ахаль-и ӳкнĕ хут çине?
Таврапăх сăвăçа:
«Илсем, — тет, —
Ман мĕскер пур, чĕрӳ варне...»

Ваттипеле — вăл чăн-чăн ватă,
Ачапала — чăн ачалла.
Кун-çул иртет,
Кун-çул шăвать, ав,
Асилӳпе шав малалла.

Мĕскер тăвайăн? Вăхăт шепсĕр,
Ухсай хупать таса куçне.
Выртать халь лăпкăн,
Ним пĕлмесĕр
Çĕршывăмри нушасене.

Халăх нушишĕн, чун нушишĕн
Ĕçетчĕ-тĕр хăш-пĕр чухне?
Пурăнăçпа малаш пурришĕн
Тытатчĕ çирĕппĕн хăйне.

Çын чĕрĕ чух эпир мĕн-ма-ши
Этем чунне курасшăн мар?
Вак-тĕвексемшĕн е ним маршăн
Кун-каçăн хатĕр ятлаçма.

Халь —
Çупсем урлă эп пăхатăп:
Ухсай тăрать таса, хитре.
Вăл вăрмана кĕрет, куратăп,
Тухать тырпуллă уй-хире:
«Саватăп эп, хирсем, сире...»
Тирпейлĕ сăввине вулатăп.

Якку Ухсай!
Утатăн чĕррĕн
Халăхпала куллен-кунах.
Çĕн ĕмĕре хастаррăн кĕрĕн,
Мĕншĕн тесен чăвашăн çĕрĕ
Чунпа упрать ялан сана.

Георгий ЕФИМОВ,
Чăваш халăх поэчĕ